“Росгосстрах” страхлакан компани 86 çул тултарчĕ

# “Ял çыннисемпе çывăх пурăнатпăр. Çапла пултăрччĕ те”

***Октябрĕн 6-мĕшĕнче “Росгосстрах” хăйĕн черетлĕ çуралнă кунне паллă тăвать. Мĕнле шайра, мĕнле ўсĕмсемпе кĕтсе илет вăл хăйĕн уявне? Çак ыйтусем çине хурав шыраса хаçат сотрудникĕ “Росгосстрахăн” Чăваш филиалĕн Муркашри страхлакан пайăн пуçлăхĕпе Валерий Иванович ВЯЗОВПА тĕл пулнă, хаçат вулавçисене ĕçри çĕнĕлĕхсемпе паллаштарма ыйтнă.***

**– Валерий Иванович, паян рынок экономикинче страхлакан компанисен йышĕ чылай анлăланчĕ пулсан та, халăх хушшинче “Росгосстрах” хăйĕн ятне çухатмарĕ. Мĕнле сăн парса хаклайратăр эсир ăна пĕтĕмĕшле?**

– Пĕр сăмахпа хуравлама çук ыйту. Малтанах çакна калас килет: пирĕн компанин çуралнă кунĕ кунта ĕçлекенсемшĕн çеç мар, пирĕн патăмăрта çулсерен страхланакансемшĕн те уяв. Çавăнпа та паян май пуррипе усă курса пурне те компанин çуралнă кунĕпе саламлатăп, пирĕнпе пĕрре йĕркеленнĕ шанчăклă туслăх малалла аталанса çĕнĕ ўсĕмсем тăвасса шанатăп. Хамăр компани ĕçĕпе вĕçĕм интересленсе тăни пире пĕтĕмĕшле аталанăва та хаклама май парать. Кăçалхи пĕрремĕш çур çулта “Росгосстрах” компанисен ушкăнĕ страховани взносĕсене иртнĕ çулхи çав тапхăртинчен 23 процент ытларах пуçтарчĕ: пурĕ 26,1 миллиард тенкĕлĕх. “Росгосстрах” кăçал та юридически лицосемпе уйрăм çынсен автотранспорчĕсене страхлассипе активлă ĕçлет. Страхованин çак тĕсĕпе пуçтарнă 6,6 миллиард тенкĕ пĕлтĕрхи пĕрремĕш çур çултинчен 60 процент пысăкрах. «Росгосстрах» куçман пурлăхпа граждансен килти пурлăхне страхлас рынокра тăнăç ĕçлет. Страховани взносĕсем кунта 3,1 миллиард тенкĕ пулчĕç. Ку енре çурт-йĕре страхласси ытларах пулса пычĕ: 2,7 миллиард тенкĕ, çулталăк каяллахинчен 37 процент пысăкрах. Страховани взносĕсем ўсни клиентсем пирĕнпе тачăрах ĕçлеме пуçланине çирĕплетет. Тĕрлĕ инкек-синкек хыççăн “Росгосстрах” хăйĕн клиенчĕсене кăçалхи пĕрремĕш çур çулта 11 миллиард тенкĕ тўлени те туслă çыхăнăва çирĕплетет кăна.

**– Эсир халĕ калани – Раççейри сăн ўкерчĕк. Хамăр патăмăра çывăхарах килсен мĕн курма пулать? Страхованин мĕнле тĕсĕсемпе ĕçлетĕр эсир?**

– “Росгосстрахăн” лицензийĕ 130 тĕслĕ страховани ĕçĕ тума ирĕк парать. Вăл шутра автотранспорт, çурт-йĕр, пурлăх, выльăх-чĕрлĕх, сывлăха тĕрлĕ инкек-сикекрен страхласси тата нумай-нумай ытти тĕссем. Çавăнпа та ыранхи кунпа пурăнакан ял çынни пирĕн пата хăйĕн шухăш-ĕмĕчĕсемпе хăюллăнах килме пултарать. Эпир ăна яланах хавас. “Росгосстрахăн” Чăвашри филиалĕн Муркашри страхлакан пайĕн ĕçне илсен, пирĕн те паян пит хĕретмелли çук. “Росгосстрах” районта хăйĕн çул-йĕрне çухатмарĕ. Çынсем пирĕн патăмăра туртăнни пире хавхалантарать, тăрăшуллăрах ĕçлеме ыйтать. Эпир çапла тăватпăр та. Пирĕн страхлакан пай кăçалхи 9 уйăхра пĕтĕмпе 14 миллион тенкĕ страховани взносĕсем пуçтарса 2 миллиард та 400 миллион тенкĕлĕх пурлăха страхларăмăр. Ку кăтарту çулталăк каяллахинчен 1,2 хут пысăкрах. Инкек-синкек хыççăн хамăр клиентсене 3 миллион тенкĕ тўлени те пĕлтĕрхи çак вăхăтринчен 1,2 хут пысăкрах.

**– Ўсĕмсем яланах савăнтараççĕ. Çакна тума хăвăр ĕçĕрте мĕн çине ытларах тимлĕх уйăратăр?**

– Чи малтанах хамăр агентсемпе ĕçлесси малти вырăнта тăрать. Вĕсем халăхпа тачă çыхăну тытасси – пирĕн пĕрлехи тĕллев. Çавăнпа та “Росгосстрахăн” çуралнă кунĕнче манăн паян çак агентсене палăртса хăварас килет. Вĕсем: Мăн Сĕнтĕр тăрăхĕпе Л. А. Седлова, Йўçкасси тăрăхĕпе Л. Д. Иванова, Катькасси тăрăхĕпе В. В. Алаева, Ярославка тăрăхĕпе Э. Л. Какаева, Чемей енче Е. Г. Иванова, Муркаш тăрăхĕпе Н. Е. Еремеева. Ял çыннисемпе ĕçленипе пĕрлех предприятисемпе тачă çыхăну тытни те пирĕн ĕçе ўсĕм çулĕпе малалла ярать. Хамăрпа тăтăшах юнашар пулнăшăн манăн паян районти перекет банкне, “Россельхозбанка”, “Свобода” ăратлă выльăх заводне, “Моргаушская” чăх-чĕп фабрикине, “Ударник” сăнавлă производство хуçалăхне, Муркашри тата Мăн Сĕнтĕрти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕсене тав сăмахĕ калас килет.

**– Тăватă çул каялла çĕршывра автогражданство яваплăхне обязательнăй йĕркепе страхласси пирки саккун вăя кĕчĕ. Автотранспортпа автогражданство яваплăхне страхласси сирĕн паян приоритетлă тĕллевсенчен пĕри пулса тăмасть-и?**

– Автотранспорта страхлассипе нумай çул ĕçленĕрен пирĕн страхлакан компани автогражданство яваплăхне страхлассипе лицензие пуринчен малтан илме пултарчĕ. Паян пирĕн страхлакан пай ОСАГО килĕшĕвĕсене 2500 ытла турĕ. Çак ен малалла та тах аталанасса сисетпĕр пулсан та, пирĕн ĕç пахалăхĕ чакмасса эпĕ шанса тăрататăп.

**– Эпĕ пĕлнĕ тăрăх хăш-пĕр страхлакан организацисем автогражданствăпа тўлевсем тăвайман пирки лицензисемпе сыв пуллашрĕç...**

– Сăмаха тытаймасан çапла пулать те. Финанс тĕреклĕхĕ çукран вĕсене ОСАГО-па ĕçлеме чарчĕç.

**– Вăхăт иртнĕ май шанчăклăха çухатнă страховани компанийĕсенче страхланнă автовладелецсене мĕн сĕннĕ пулăттăр?**

– Камăн ăçта страхланасси – кашни çыннăн хăйĕн суйлавĕ. Анчах кун пек чух страхлакан компани пирки ытларах пĕлме тăрăшни кирлĕ: вăхăт çитсен сирĕн ыйтăва тивĕçтерейрет-и вăл? Çакна та каласа хăварас килет. Хăрушлăх пысăк объектсене (ОПО) страхлас енĕпе страхланă чух ертўçĕсене уйрăмах асăрханулла пулма сĕнес килет. Тĕслĕхрен, кĕçех йышăнма хатĕрлесе çитернĕ Федераллă Саккун проектĕнче кун пек чух страхлакан компанирен çакна ыйтĕç: 1) Устав капиталĕ 1 миллиард тенкĕ ытла пулмалла. “Росгосстрах-Поволжье” ООО-н вăл сумма 1,8 млрд. тенкĕ – Чăваш Республикинчи страховани ĕçне пурнăçлакансенчен чи пысăкки; 2) Страхлакан организацин 7 регионта представительствăсем пулмалла – пирĕн вĕсем пур; 3) Яваплăха страхлассипе ĕç опычĕ 2 çултан кая мар пулмалла. Вăл пирĕн çителĕклине пурте пĕлеççĕ. Апла пулсан пирĕн пата килме пултаратăр. Кунта хаçат вулавçисен татах ыйтусем çуралаççĕ пулсан, эпир сире Муркашри Мир урамĕнче 6-мĕш çуртра кĕтетпĕр. Пирĕн телефонсем: 2-17-46 е 2-11-06. Сире вăхăтпа тĕрĕсленнĕ хамăрăн шанчăклă компанире эпир яланах хавас.

**Анатолий БЕЛОВ калаçнă.**



Прокуратурăра

## Салтак ачи...

2007 çулхи çу уйăхĕн 22-мĕшĕнче çул çитнĕ Сергей Андреевич Степанова медицина тĕрĕслевĕ çара юрăхлă тесе йышăнать, тепĕр виçĕ кунран салтака кайма повестка парать. Ун çине çартан каяссинчен пăрăнни уголовнăй айăплав пулни пирки çырнине Сергей вуланă-ши? Çар комиссариатĕнче кун пирки пĕрре мар каланине хăлхана чикнĕ-ши? Илтнĕ, вуланă пулĕ та-ха, анчах...

Салтак ачи палăртнă кун (çу уйăхĕн 25-мĕшĕ) повесткăра кăтартнă вăхăта районти çар комиссариатне çитет, ăсатма килнĕ тăванĕсемпе юлташĕсенчен уйрăлса ытти призывниксемпе пĕрле Канашри пункта каять. Йăлтах йĕркеллĕ темелле... Салтак пурнăçĕн пуçламăш утăмĕсем... Команда пухăнса çитейменнипе çу уйăхĕн 29-мĕшĕнче ăна тепĕр кунхи 11 сехетчен увольнение кăлараççĕ. Çакăнтан пуçланать те салтак ачин саккуна пăсасси. Шупашкара таврăннă каччă хăйĕн хĕрĕ патне 19-мĕш профтехучилищĕне кĕрсен вăл унран 3,5-мĕш уйăх йывăр çын пулнине пĕлет. Кун хыççăн Сергей Нўрете таврăнать те çитес кун çар пунктне каяс мар тесе çар тивĕçне пурнăçлассинчен хăй тĕллĕн пăрăнма шутлать.

Çĕртме уйăхĕн 13-мĕшĕнче ăна пурăннă çĕртен милици сотрудникĕсем районти прокуратурăна тытса килеççĕ. Кунта унпа çар комиссарĕ тĕл пулса калаçать. Çак кунах ăна çар комиссариачĕ çĕртме уйăхĕн 14-мĕшĕнче салтак кайма çар комиссариатне 7 сехете килме повестка парать. Анчах салтак ачи ку хутĕнче те повестка çине алă сулать, палăртнă вăхăта çар комиссариатне каяс вырăнне çуранах Шупашкара тухса утать.

Саккуна пăснă тĕслĕхе пăхса тухса район сучĕ 18 çулхи Сергей Андреевич Степанов Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 328-мĕш статйин 1-мĕш пайĕнче пăхнă преступление тунă тесе палăртрĕ, салтак ачине пĕр çулталăк та икĕ уйăхлăха условнăй майпа ирĕкрен хăтарма приговор кăларчĕ.

Çакна палăртмалла, паянхи куна район судне çара каяссинчен сăлтавсăр пăрăнакансем пирки пурĕ 6 ĕç ярса патăмăр. Паянхи калаçу пирки призывниксен манас марччĕ.

**М. ТАРАСОВ, уйрăмах кăткăс ĕçсемпе ĕçлекен следователь.**

## Объявления

“ЗАО “Специализированная организация “Волжский аукцион” 5 ноября 2007 г. в 10 часов 00 минут проводит открытые торги – аукцион по продаже помещений:

| Лот № | Наименование | Начальная цена, руб. | Сумма задатка, руб. | Шаг аукциона, руб. |
|---|---|---|---|---|
| 1 | Помещение №1, площадью 71,9 кв.м. | 72000 | 14500 | 3500 |
| 2 | Помещение№2, площадью 99,45 кв.м. | 99000 | 20000 | 5000 |
| 3 | Помещение №4, площадью 62,5 кв.м. | 63000 | 12500 | 3000 |
| 4 | Помещение №5, площадью 92,9 кв.м. | 93000 | 18500 | 4500 |
| 5 | Помещение №6, площадью 76,6 кв.м. | 77000 | 15500 | 4000 |
| 6 | Помещение №1, площадью 90 кв.м. | 81000 | 16000 | 4000 |

Помещения (лот №1,№2,№3,№4,№5) расположены на первом этаже нежилого одноэтажного кирпичного здания по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, с. Акрамово, ул. Центральная, д.28.

Помещение – лот №6 , расположенное на первом этаже жилого одноэтажного кирпичного здания и в дощатой веранде, по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, с. Юнга, ул. Школьная, д.№2.

Обязательства победителя аукциона:

- заключение договора купли-продажи нежилого помещения не позднее 5 дней со дня проведения аукциона;
- оплата полной стоимости помещений по итогам аукциона не позднее 5 дней со дня заключения договора купли-продажи.

Критерий выявления победителя – максимальная сумма, предложенная участником аукциона.

Форма подачи предложений по цене – открытая.

1. Дата начала приема заявок 6 октября 2007 года, окончание приема заявок – 29 октября 2007 г.

Задаток должен быть перечислен до 17 часов 00 минут 29 октября 2007 г.

Прием заявок на участие в аукционе осуществляется с 9 часов 00 минут до 17 часов 00 минут по адресу: Чувашская Республика, гор. Чебоксары, ул. К. Маркса, дом 19, справки по телефону 62-39-08.

Перечень документов, предоставляемых претендентами для участия на аукционе:

1. Заявка на участие в аукционе установленного образца в двух экз.;
2. Платежный документ с отметкой банка об исполнении, подтверждающий внесение задатка;
3. Выписка из единого государственного реестра юридических лиц – для юридических лиц, выписка из единого государственного реестра индивидуальных предпринимателей – для индивидуальных предпринимателей, копии паспорта удостоверяющих личность – для физических лиц.

Реквизиты счета для зачисления сумм задатков:

Закрытое акционерное общество “Специализированная организация “Волжский аукцион”, ИНН 2128050182/КПП 212801001, р/сч. 40702810200000002149, в ООО КБ “Мегаполис” гор. Чебоксары, БИК 049706723, к/сч. 30101810600000000723. Назначение платежа: за покупку помещения лот № ___”.

**Участница долевой собственности Волкова Софья Степановна, 12.05.1931 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, деревня Куськино, улица Садовая, дом 54, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения на территории СХПК “Хлебороб” в счет доли в праве общей собственности на земельный участок общей площадью 2,68 га.**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 3 адреса:**

**1. Администрации Ильинского сельского поселения.**

**2. Волковой Софье Степановне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, деревня Куськино, улица Садовая, дом 54.**

**3. Межрайонное отделение № 4 Управления Роснедвижимости ЧР, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, село Моргауши, улица Мира, дом 6.**

**Участница долевой собственности Маринкина София Макаровна, 10.02.1934 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, деревня Верхние Олгаши, дом 31, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей соственности на земельный участок общей площадью 19,65 га из земель сельскохозяйственного назначения расположенных на территории СХПК «Сундырский» в поле № 3 полевого севооборота № 4.**

**Все возражения по месту расположения земельного участка прошу направить по адресу доверенного лица: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, село Большой Сундырь, улица Горького, дом 28, Маринкину Валериану Игоревичу ценным письмом с вложением.**

**Участники долевой собственности:**

**1. Михайлова Римма Петровна, 28.02.1951 г.р., проживающая по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр. Тракторостроителей 63/21-303.**

**2. Васильев Геннадий Петрович, 18.12.1953 г.р., проживающий по адресу: г. Новочебоксарск, ул. Коммунистическая, 34-33.**

**3. Вастрейкина Галина Петровна, 02.01.1956 г.р., проживающая по адресу: г. Чебоксары, ул. Гражданская, 113-24.**

**4. Юрьева Зинаида Петровна, 03.01.1960 г.р., проживающая по адресу: г. Санкт-Петербург, ул. Набережная реки Фонтанки, 150-61, сообщаем о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения на территории СХПК «Хлебороб» в поле № 6 общей площадью 1,34 га.**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 3 адреса:**

**1. Администрации Ильинского сельского поселения.**

**2. Михайловой Римме Петровне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр. Тракторостроителей 63/21-303.**

**3. Межрайонное отделение № 4 Управления Роснедвижимости ЧР, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, село Моргауши, улица Мира, дом 6.**

**Участница долевой собственности Грачева Лилия Николаевна, 24.09.1976 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, село Оточево, улица Восточная, дом 41, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения на территории СПК им. К. Иванова в поле № 5, полевой севооборот № 2 общей площадью 1,08 га.**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 3 адреса:**

**1. Администрации Сятракасинского сельского поселения.**

**2. Грачевой Лилии Николаевне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, село Оточево, улица Восточная, дом 41.**

**3. Межрайонное отделение № 4 Управления Роснедвижимости ЧР, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, село Моргауши, улица Мира, дом 6.**

**Участник долевой собственности Грачев Радислав Алексеевич, 21.03.1968 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, село Оточево, улица Восточная, дом 41, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения на территории СПК им. К. Иванова в поле № 5, полевой севооборот № 2 общей площадью 1,08 га.**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 3 адреса:**

**1. Администрации Сятракасинского сельского поселения.**

**2. Грачеву Радиславу Алексеевичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, село Оточево, улица Восточная, дом 41.**

**3. Межрайонное отделение № 4 Управления Роснедвижимости ЧР, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, село Моргауши, улица Мира, дом 6.**

**Участник долевой собственности Степанов Виталий Рудольфович, 06.08.1961 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр. Тракторостроителей, д. 30, корп. 1, кв. 15, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения на территории СХПК «Герой» в поле № 2, полевой севооборот № 2 общей площадью 1,67 га.**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 3 адреса:**

**1. Администрации Ярабайкасинского сельского поселения.**

**2. Степанову Виталию Рудольфовичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр. Тракторостроителей, д. 30, корп. 1, кв. 15.**

**3. Межрайонное отделение № 4 Управления Роснедвижимости ЧР, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, село Моргауши, улица Мира, дом 6.**